К 84.89 (=Чув)
М33
Ч-43808

Галина МАТВЕЕВА

# ХАМĂРККА



Национальная библиотека ЧР
4-043808

К К 84.89(=Чув)
М33

Галина МАТВЕЕВА

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

# ХАМĂРККА

Калав



Шупашкар
Чăваш кӗнеке издательстви
2011

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4
М 33

**Матвеева Г.А.**
М 33 Хамăркка: калав / Г.А. Матвеева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2011. — 31 с.
ISBN 978-5-7670-1823-9

Проверено 2 СЕН 2017

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4**

**ISBN 978-5-7670-1823-9**

© Матвеева Г.А., 2011
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2011

4-43808
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# ÇĔНĔ ЯТ

Хамăрккан читлĕхĕ лутра та тăвăр. Кунта Сашук кравачĕ çинчи пек карăнса та тăсăлса выртаймастăн. Пĕкĕ пек авăнса та шăм-шака кантараймастăн. Хутса ăшăтман кивĕ сарайра самаях çӳçентерет. Сашукпа ăмăртмалла пĕр пӳлĕмрен теприне чупасчĕ халь — самантрах ăшăнма пулĕччĕ. Çук çав, ку читлĕхрен тухаймăн. Никама та пăхăнма юратман Хамăркка унăн çирĕплĕхне кунта лекнĕ кунах тĕрĕслесе пăхрĕ — решеткене шăл витмест.

Сивĕ. Хамăркка хăй айне сарнă улăм çине лăпчăнарах ларчĕ. Çак самантра ăна хăва хуллинчен авса тунă карçинкка аса килчĕ. Вăл та çак читлĕх пекех пĕчĕкчĕ, анчах çӳлтен хупă марччĕ. Шала Маруç мăнак вăрăм çăмлă çемçе тутăр хурса панăччĕ. Шăнма пуçласанах Хамăркка ун ăшне чакаланарах кĕрсе выртатчĕ те тутлă ыйха путатчĕ. Пасара та çав карçинккапах илсе тухрĕ ăна Маруç мăнак, вара пач палламан хĕрарăмпа арçын ачана тыттарчĕ. Амăшĕпе ывăлĕ пулчĕç кусем.

Хĕрарăмĕ Маруç мăнака чăштăртататакан темĕнле хут парасшăн пулчĕ — Хамăрккана çав ниме тăман хутпа улăштарасшăн ĕнтĕ. Лешĕ илмерĕ. Тĕрĕс турĕ. Мĕне кирлĕ вăл, туалетри савăт çине чĕрсе хума кăна юрăхлăскер?

— Укçасăрах паратăп, пирĕн килте кушак пур, темиçе усраймастпăр, — терĕ Маруç мăнак. Арçын ачана вара çапла каларĕ: — Юратса пăх. Апат хума çеç мар, шыв ярса пама та савăт хатĕрле. Унăн та çăварĕ типет, санăн çеç мар. Тирĕкне вара ир те каç тасатсах тăмалла. Кушаксем тасалăха юратаççĕ.

— Ăнлантăн-и, Сашук? — ыйтрĕ ачаран амăшĕ.

— Аха, — таврăнчĕ лешĕ, ниçта кайса кĕрейми савăннипе йăл-ял çиççе тăраканскер.

Çапла пĕлчĕ Хамăркка Маруç мăнак килĕнче хăй ытлашши пулнине. Çавăнпах ăна çак Сашук ятлă ачана парса яраççĕ. Арçын ачин вара Маруç мăнакăнни пек ăшă карçинкка та çук. Вăл пĕчĕкскере çăмлă алсишĕ çине лартрĕ, ачашласа илчĕ, унтан курткине уçса хĕвне ячĕ те тӳмисене тӳмелерĕ. Ӳкесрен хăранипе Хамăркка пĕчĕк чĕрнисемпе Сашукăн свитерĕнчен çакланчĕ. Ăшă кунта, анчах нимĕн те курăнмасть. Ăçта илсе каяççĕ-ши ăна?

...Тепĕр сехетрен Хамăрккана хĕврен кăларса урайне ячĕç. Тĕрĕссипе, Маруç мăнак патĕнче пурăннă чух Хамăркка мар, Мăркка ятлăччĕ-ха вăл. Çĕнĕ ята Сашук тупса пачĕ.



Маруç мăнакран илнĕ чухне кушак çурин хăрах куçĕ пӳрленерех тăратчĕ.

— Ан пăшăрханăр, тӳрленет кĕçех, — лăплантарчĕ Сашукпа амăшне Маруç мăнак. Чăнах та, вăл каланă

пекех пулчĕ. Ик эрнерен пӳрленни иртсе кайрĕ те, кушак çурин куçĕсем çап-çавра курăнма пуçларĕç.

— Анне, кур-ха, епле пысăк та çаврака кушакăн куçĕсем. Янахĕпе мăйăхĕ шап-шурă, çурăм шăмми тăршшĕпе çăмĕ хура, аякĕсем кăшт çутăрах, вырăн-вырăнпа хура пăнчăллă. Тата камăн пур-ши çакăн пек кушак? Илемлĕ вĕт пирĕн Мăркка?

— Çав тери илемлĕ.

— Малашне вăл хамăрăнах пулать-и? — тĕпчерĕ ача.

— Камăн пултăр-ха тата? Хамăрăн, паллах, — йăл кулса илчĕ амăшĕ.

— Пин çуллăхах хамăрăн-и?

Амăшĕ халĕ сасăпах кулса ячĕ.

— Ĕмĕрлĕхех. Пин çул нимле чĕр чун та пурăнмасть. Кушаксем, вĕсене лайăх пăхсан, çирĕм çултан иртме пултараççĕ.

— Мăркка-Хамăркка, — ытараймасăр пĕчĕк тусне çупăрларĕ Сашук. — Эсĕ пурăнатăнах пин çул. Сана эпир питĕ лайăх пăхăпăр.

Çакăнтан пуçланса кайрĕ те кушака кăшт урăхларах чĕнесси.

Амăшĕ хирĕç пулмарĕ. Кушак çури хăй вара Хамăркка ят Мăркка тенĕ пекрех илтĕннĕрен кăна килĕшрĕ. Итту тӳрех мар, хăйне чĕннине илтмĕш пулса пĕр эрне пек çӳренĕ хыççăн çеç. Ĕмĕрĕпех мăртăхса çӳреймĕн ĕнтĕ. Тата Сашукĕ те япăх ача мар. Туслă вĕсем иккĕшĕ. Телевизорпа интереслĕ кино курнă чух çемçе кресло çинче пĕрлех лараççĕ. Сашук урок тунă вăхăтра Хамăркка сĕтел çинчи çуллĕ лампа айне пырса вырнаçать — ăшă унта. Ыйхăласа тетрадь çинчех çывăрса кайсан та вăрçмасть ăна тусĕ. Юрататать вăл Хамăркка-

на. Юратнипех темĕн тĕрлĕ мыскара та шутласа кăларать. Çав ят пиркиех-ха. Ӳснĕçемĕн кушакăн хырăм айĕнчи çăмĕ хăмăрланчĕ те, ача ăна Хамăркка-хăмăркка теме пуçларĕ. Ку темех мар-ха, чăтма пулать. Хамăрккка-самăркка тени вара шутсăр кӳрентерет. Шӳтлесе çеç çапла калать-ха ĕнтĕ, паллă. Çапах та... хăвăнпа çавăн пек шӳтлеччĕр-ха — савăнтарать-и сана?

Тусĕн тата тепĕр йăли килĕшмест Хамăрккана. Арçын ачан юратнă фильмĕсем пур: пĕри — телевизорпа час-часах кăтартакан «Солдаты» кино, теприне — «Гарри Поттер» текеннине — килте пĕчченех тунсăхласа ларнă чух компьютерпа курать. Хамăркка та çав тери юрататъ ку фильмсене, мĕншĕн тесен вĕсем вĕçленичченех ăшă та çемçе чĕрçи çинче темиçе тĕлĕк те курма май пур.

Салтаксем çинчен ӳкернĕ фильмри Соколова Сашук уйрăмах килĕштерет, ӳссе çитсен хăй те ун пек маттур салтак пулма ĕмĕтленет. Савăнăçне ниçта чикейменнипе Хамăрккана та Сокол тесе чĕнме тытăнать вара. Гарри Поттерпа интересленсе кайрĕ те Хамăрккаран Гарри туса хучĕ. Вăхăтлăх, паллах. Ку чир Сашукăн хăвăртах иртет, çапах та кăмăла самаях пăсса хăварать. Хамăрkка вăл Хамăркка. Нимле Сокол та, нимле Гарри те мар.

## Тимĕр читлĕх

Сарай алăкĕ патĕнче ура сасси илтĕнчĕ. «Тинех мана çак тăвăр читлĕхрен кăларса киле илсе каяççĕ ĕнтĕ», — савăнчĕ Хамăркка çывăх çыннисем килессе чăтăмсăррăн кĕтсе. Акă алăк чĕриклетсе уçăлчĕ те, янкăр хĕвел çутинче Сашукпа амăшĕ мар, Хамăрккана сарайне

килсе хупнӑ шур халатлӑ ҫынпа тепӗр тете куранса кайрӗҫ. Вӗсем пӗр пысӑк йытта ним сармасӑрах урайне хучӗҫ те читлӗхри кушак енне ҫавӑнса пӑхмасӑрах тухса кайрӗҫ.

— Тетте вырӑнне хураҫҫӗ чӗр чунсене, выляса йӑлӑхаҫҫӗ те урама хӑваласа кӑлараҫҫӗ. Мӗнле лайӑх йытта япӑхтарнӑ, ҫывратса яма тиврӗ! — алӑка хупнӑ май такама вӑрҫрӗ шурӑ халатли.

Ку ҫынна Хамӑркка тахҫантанпах паллать. Палласси-пӗлесси йӑлтах Сашук пирки пулса тухрӗ. Килте чухне Хамӑрккаран хӑпма та пӗлмест вӑл. Мӑйӑхӗнчен пӗр шӑрчӗ тӑпӑлса ӳкнине те, сывлӑх хавшанӑ вӑхӑтра сӑмса тӑрри типнине те пытараймӑн унран. Йӑлтах курать, асӑрхать, хыпашласах тӑрать.

Шкултан килчӗ те пӗррехинче хӑнӑхнӑ йӑлапа Хамӑрккана алла тытрӗ. Малтан пуҫран ачашларӗ, хӑлха хыҫне хыҫса килентерчӗ, янах айне шӑлкаларӗ. Ача унӑн ҫурӑмне, чӗлхе тӑсӑлса ҫитеймен вырӑна, хыҫкалама пуҫласан Хамӑркка канӑҫлӑн мӑрлатма пуҫларӗ. Кӗҫех Сашук кушака чӗркуҫҫи ҫине месерле выртт арчӗ, ҫемҫе аллипе унӑн хырӑмне шӑлкаласа илчӗ. Унтан шарт сикнӗ пек пулчӗ.

— Чим, мӗскер ку санӑн? Ҫӑпансем мар пулӗ те?.. Чӑнах та, ҫӑпансем, — кушак ҫурин хырӑмӗ ҫинчи мӑкӑрӑлчӑк вырӑнсене асӑрхаса шикленсе ӳкрӗ ача. — Мӗскӗнскерӗм, хытах ыратать-и?

Мӗн пирки калать ача — кушак ӑнланмарӗ. Унӑн нимӗн те ыратмасть. Сашук вара часрах кӳршӗре пурӑнакан Петьӑпа Витя патне телефонпа шӑнкӑравларӗ.

— Пирӗн кушак чирлӗ. Аттепе анне ӗҫрен яланах каҫа юлса таврӑнаҫҫӗ, вӗсене кӗтсе пулмасть. Хамӑрк-

кана халех тухтăр патне илсе каймалла. Манпа пĕрле пымастăр-и?

Юлташĕсем нумай кĕттермерĕç — персе те çитрĕç. Вĕсене те кушак хырăмĕ çинчи măкăрăлчăксене кăтартрĕ Сашук.

— Часрах ветеринари станцине каймалла. Телее, вăл пирĕн урамрах вырнаçнă. Хам тӳссе курнă эп çăпан нушине. Тăвата çулта чухне ман хырăм çине çав тери пысăк пӳрлешке тухса ларнăччĕ. Хускалсанах хырăм çурăлса каясла ыратаканскер. Касса юхтармасăр та иртсе каймарĕ вĕт. Больницăра пĕр эрне аннесĕрех выртма тивнĕччĕ, — ăнлантарчĕ вăл тусĕсене.

— Хамăркка макăрмасть вĕт-ха. Тен, каплах иртсе каять? — иккĕленчĕ Витя.

— Халь пĕчĕк-ха ун çăпанĕсем, çавăнпа сисмеллех ыратмаççĕ пуль. Пысăклансах ан кайччăр тесен сиплес пулать вĕсене, унсăрăн кушака операци тума тивĕ, — пăшăрханма пăрахмарĕ Сашук.

Арçын ачасем кушака хупăлчаллă карçинккана лартрĕç те урама илсе тухрĕç. Çур сехет пек утсан вĕсем пĕр хутлă йывăç çурта кĕчĕç. Килĕшмерĕ Хамăрккана кунта. Таса, анчах чун сӳлетмелле сивĕлĕх тăрать тата ют шăршăсем явăнаççĕ.

Сашук каланине тимлĕн итленĕ хыççăн шур халатлă арçын перчетке тăхăнса Хамăрккана алла тытрĕ, ун хырăмĕ çинчи çăмне сире-сире тем шырарĕ.

— Кăкăр паллисем кусем, нимле çăпан та мар, — терĕ тухтăр ачасене.

— Епле апла? Пирĕн Хамăркка — арçын ача. Анне те çаплах каларĕ. Апла тăк унăн кăкăрĕсем пулмалла мар, — хирĕçлерĕ Сашук.

— Эсĕ те арçын ача. Санăн хăвăн кăкăр паллисем пур вĕт? — ыйтрĕ тухтăр.

— Пур, — терĕ лешĕ кăкăрне куртка çиййĕнех хыпаласа.

— Вăт, унăн та пур, иккĕ çеç те мар. Сып-сывах санăн тăвата уралла тусу, — лăплантарчĕ шурă халатлă çын.

Арçын ачасем кушак çурине карçинккана лартса каялла тухрĕç.

«Айвансем! Нимĕн те сисмерĕç. Шурă халатлă арçын кулса ярасран хăйне аран-аран тытса чарнине те асăрхамарĕç», — шухăшларĕ хăй ăшĕнче Хамăркка. Çав тери тарăхрĕ вăл хăйне çапла намăс кăтартса çӳренĕшĕн. Каялла таврăннă чух карçинккаран тухса тарма темиçе хут та хăтланса пăхрĕ. Ăçта унта! Виçĕ арçын ачаран тарса пăх-ха.

Паян шăпах хайхи шурă халатлă çын кĕрсе тухрĕ сарайне, темшĕн вăл Хамăрккана паллаймарĕ. Пĕр çул хушшинче манса кайнă-ши?



Кушак кӳрши ҫине пăхса илчĕ. «Ҫывратса яма тиврĕ терĕҫ. Ҫывăрать пулсан аван-ха, — шухăшларĕ Хамăркка. — Тимĕр решетке витĕрех ҫыртаяс ҫук мана ку йытă, анчах вĕрсе сехрене хăпартма пултарать. Ҫывăртăрах». Йытă вăранасран шикленсе Хамăркка сас кăлармасăр ларчĕ.

Пĕр сехет иртрĕ ҫапла, иккĕ, виҫҫĕ — йытă вăранмарĕ. Каҫ пулчĕ. Ҫĕрле те хускалмарĕ кӳршĕ. Ирхине Хамăрккан чĕри ырă мара сиссе йăшкама пуҫларĕ: йытăсем кун пек вăрах ҫывăракан марччĕ-ҫке.

Алăк чĕриклетсе уҫăлчĕ. Шурă халатлă ҫын кĕрсе Хамăрккана решетке витĕрех ҫăкăр пăрахса пачĕ.

— Ҫи, ĕнертенпе выҫрăн пулĕ. Килӳнте йĕркеллĕрех тытмаллаччĕ хăвна, вара кунта та лекместĕнччĕ, — мăкăртатрĕ вăл. — Тата тăхăр кун ларма тивет сан ҫак читлĕхре. Урмăш чир ермен пулсан хуҫусем килсе илсе кайĕҫ, чирлĕ тĕк — сана та ҫывратса ярăпăр. Мĕн, ăнланнă пек, куҫран пăхатăн?

Ку сăмахсем хыҫҫăн Хамăрккан хырăм выҫни туххăмрах иртсе кайрĕ. Мĕн ăнланмалла марри пур кунта? Авă йытта ҫывратса янă та — унăн вăранма вăйĕ ҫук. Апла тăк вăл ухутана та ҫӳреймĕ, кил-ҫуртне те сыхлаймĕ, кушаксене те хăвалаймĕ. Ҫак ĕҫсене тăвайман йытă — йытă та мар, кушак кулли кăна. Ҫывратса ярсан эпĕ те ҫапла ним хускалмасăр выртăп, кашни кун Сашукăн ашшĕпе амăшĕнчен те иртерех тăрса хамăрăн кил-ҫурта тĕрĕслесе тухаймăп. Киле пĕр-пĕр ют кушак аҫи пырса кĕрес тĕк?..

Ҫакăн пирки шухăшласа илсенех Хамăркка куҫĕсем сиввĕн ҫуталса илчĕҫ. Мĕнле вăл «ют кушак аҫи»? Мĕн тума кĕртмелле ăна? Ку вăл Хамăрккан чысне яниех

пулĕччĕ. Тата мĕнле чир-ши вăл урмăш чир текенни? Ахăртнех, картишĕнче çулсемпе тротуарсем, ачасем вылямалли çерем çинче ларакан çаврака уралла, нумай куçлă чупкăнсенчен ерекенскер вăл. Хускалмасăр ларнă чух пит хăрушшăнах курăнмаççĕ хăйсем. Чупма пуçласан вара кайри-малти куçĕсене пурне те ялтăртаттараççĕ, улаççĕ-кĕрлеççĕ, ырă мар шăршă, усал пăс кăлараççĕ. Сашук вĕсене «машина» тет. Хамăркка пулсан çав шăршлăскерсене çакăн пек янăравлă ятпа ним тусан та чĕнес çук. Мĕн лайăххи тупнă вĕсен çумĕнче арçын ача? Автомобильсем çинчен кăларнă журналсене кашни эрнере туянать. Илсе килет те çĕннине Хамăркка çинчен манса кайсах вулать вара. Е тата компьютерĕ умне ларать те машинăсене монитор çинче ăмăртса чуптарма пуçлать. Сехечĕ-сехечĕпех, амăшĕ ĕçрен таврăнса хăваласа яричченех, выляса ларма пултарать. Çавăн пек тунсăхлă самантсенче Хамăркка ирĕксĕрех иккĕленме пуçлать. Кама ытларах юратать-ши Сашук: ăна е çав ялтăркка та сивĕ чупкăнсене? Кашни кун пуç ватсан та çак ыйту хуравне тупаймасть вăл.

Маруç мăнак патĕнче те, Сашуксен килĕнче те Хамăркка ниçта та тухса курман. Намăс пулсан та йышăнмах тивет: кăштах кăна хăравçă вăл. Сашук хĕве чиксе урама уçăлма илсе тухсан та çерем çине янă-яман, пĕр-пĕр Кампур хăваланă пек, подъезд алăкĕ патнелле вирхĕнет. Шикленсе шăртне тăратнăран хўри тукмак пек пысăккăн курăнать вара. Алăк хупă чухне хускалмасăр ларакан çав нумай куçлă, тăватă уралла чупкăнсем айне кĕрсе пытанать. Кун пекки пĕрре мар пулнă. Лешсен çаврака урисем пĕрре те Сашукăнни пек ăшă мар: сĕртĕнсе курнă. Вĕсен çумĕнче пит киленсех

лараймӑн. Сашукран пытанма кӑна меллӗ вӗсем. Анчах ача унтан ятла-ятла хӑваласа кӑларать те киле илсе кӗрет, тӳрех тяпписене ҫуса ярать. Тем тесен те ҫавсенченех ернӗ ҫусан та кайман усал чир Хамӑрккана. Халӗ мӗнле сывалмалла-ши ӗнтӗ ҫав чиртен?

Ҫапла кулянса ларнӑ ҫӗртех ҫывӑрса кайрӗ мӗскӗн. Тӗлӗкре ӑна пӗтӗм кӗлеткене пусарса тӑракан читлӗхпе сивӗ сарай мар, Сашукпа иккӗшӗ пурӑнакан ӑшӑ пӳлӗм курӑнчӗ. Килӗнче Хамӑрккан кӗлеткине хускатмалли, тяпписене вылятмалли, чӗрнисене якатмалли тренажӗр пур. Сашукӑн хул-ҫурӑма ҫирӗплетмелли пусмине лавккара туяннӑччӗ, кушак валли килтех турӗҫ: пусма ҫумне ҫӳллех мар юпа вырнаҫтарса лартрӗҫ те ӑна кив кавирпе чӗркесе ҫыхрӗҫ.

Пурне те пӗлме юратакан Хамӑркка малтан ним ӑнланмасӑр пӑхса ларчӗ: мӗн тума кирлӗ япала ку? Чӗрнисене кантарма сӗтел урине чӑрмалама пуҫларӗ те пӗррехинче, Сашук ӑна йӑтса илсе хайхи кавирпе чӗркенӗ юпа ҫумне кармаштарса-карӑнтарса тӑратрӗ. «Чӑрмала чуну каниччен, сӗтел-пукана ан тӗкӗн!» — терӗ. Ҫапла темиҫе хут пыра-пыра тӑратнӑ хыҫҫӑн хӑнӑхрӗ кушак, килти сӗтел-пукан урисене чӑрмалама пӑрахрӗ. Сашук пусмаран уртӑнса тӗрлӗ хусканусем тунӑ чухне вӑл та чӗрнисемпе кавиртен ҫакланса пӗтӗм кӗлеткипе туртӑнса илетчӗ. «Манӑн Хамӑркка — хам пекех спорта юрататканскер», — тесе савӑнатчӗ тусӗ.

Шӑпах ҫав тренажӗр курӑнчӗ те кушака тӗлӗкре. Эх, чӑрмалать пек, эх, чӑрмалать пек вӑл кивӗ кавире. Пӗтӗм кӗлеткипе ҫӳлелле туртӑнса канлӗн карӑнса илет пек Хамӑркка.

# Чике хуралçи

«Асту, ывăлăм, вăйăран вăкăр тухать», — тесе унччен те калакалатчĕ-ха амăшĕ. Ку сăмахсен пĕлтерĕшĕ пирки Сашук шухăшласах кайман. Чăнах та, кулянмалли-макăрмалли пач кĕтмен çĕртен сиксе тухма пултарать иккен.

Çав кун Сашук Илюка выляма чĕннĕччĕ. Пĕр класра вĕренеççĕ вĕсем, парта хушшинче те юнашар лараççĕ. Шăнкăрав сасси илтĕнсенех ăна кĕтсе илме алăк патне ыткăнчĕ: тинех! Илюкпа Сашук тĕрлĕ вăйăсем шухăшласа кăларма ăста. Выляма пуçлаççĕ те хырăм выççине те манаççĕ, хĕвел аннине те асăрхамаççĕ. Паян пушшех интереслĕ пулмалла: Илюк аллинче авă мĕн чухлĕ журнал — пурте автомашинăсем çинчен. Тахçанах килменччĕ Илюк. Юлташне кура ăна та амăшĕ кушак туянса pană. Пин хут тархаслана хыççăн. Кушакĕпе вылявыля Сашук патне килме те вăхăт тупăнманччĕ лешĕн.

Алкумĕнчи хавасла шав çемçе диван çинче çывăракан Хамăрккана та ыйхăран вăратрĕ. Тĕрĕслес пулать: кам килнĕ унта? Унăн тивĕçĕ çавă. Хамăрккан кăмăлне ют кушак шăрши пăсрĕ. Алăк патне пынă-пыман туйрĕ вăл çав шăрша. «Нивушлĕ Илюк хăйпе пĕрле ют кушак илсе килнĕ? Ку таранччен апла хăтланакан марччĕçке. Ют кушака кам чĕннĕ кунта? Кам пăсма хăйнă ман чикке?» — тарăхрĕ Хамăркка, хăна хăйне килĕшменнине асăрхаттарса кĕлеткине пĕкĕ пек авса хучĕ, чашкăрса илчĕ. Пĕрле выляс ĕмĕтпе хаваслаnnă ачасем Хамăрккан çилли тулса пынине сисмерĕç те, курмарĕç те. Кăлăхах. Хăй асăрхаттарнинe шута хуман пирки кушак хăна енне вирхĕнчĕ, ăна шăлавар пĕççин-

чен çыртса илчĕ. Ыратнипе тата ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе хăраса ӳкнĕ Илюк çари! çухăрса ячĕ. Вăл çухăрнипе Хамăркка тата ытларах тулхăрса кайрĕ, тата ытларах чавма, çыртма пуçларĕ. Анчах унăн çилли Илюка мар, Сашука лекрĕ, мĕншĕн тесен лешĕ тӳрех юлташне хӳтĕлеме ыткăнчĕ. Кухньăра кукăль пĕçерекен амăшĕ пырса Хамăрккана хăваласа яриччен ачан алли-ури чăрăм-чăрăмахчĕ ĕнтĕ.

Вылясси пулмарĕ. Илюк тӳрех килне тухса утрĕ. Сашукăн суранĕсене амăшĕ йодпа сĕрсе ячĕ. Ир енне ачан аллисем шыççа кайрĕç, ăна вĕрилентерсе пăрахрĕ. «Кушак усрасси ача ваййи мар тесе малтанах асăрхаттартăм сире — итлемерĕр. Тăрантăр-и выляса?» — «васкавлă пулăшу» машинине кĕтнĕ май вăрçăна-вăрçăна пӳлĕм тăрăх утрĕ ашшĕ. Ӳпкев сăмахĕсем ытларах амăшне пырса тивнине Сашук та, Хамăркка та лайăх ăнланчĕç, çавăнпа шарламарĕç. Çемьене кушак çури илме амăшĕ ирĕк паман пулсан Хамăркка пачах урăх киле лекмеллеччĕ, пачах урăх ятпа пурăнмаллаччĕ паян.



— Елена Андреевна, ача аллине кушак чĕрнинчен тасамарлăх лекнĕ, йод сĕрнипех, эмел ĕçтернипех иртес çук. Ача-пăча больницинчи травматологи уйрăмне леçме сĕнетĕп, — терĕ Сашук

амăшне тухтăр. — Сурана касса тасатма тивет пулĕ. Çапăçакансене вара... — кушак çине пăхса илчĕ шурă халатлă çын, — çапăçакансене читлĕхе хупса хумалла. Илсе кайăр ветеринари станцине. Тен, ăна пĕр-пĕр урнă чĕр чунран чир ернĕ?..

— Чирлĕ мар вăл нимĕн чухлĕ те, — хирĕçлерĕ амăшĕ. — Хамăр кушака эпир ниçта та кăларман, ытти кушаксемпе хутшăнтарман.

— Чирлĕ-и, сывă-и — ветеринари станцийĕнче татса парĕç. Уртаракан чир ерни — шӳтлемелли япала мар. Ача сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратас мар тесен кушака тĕрĕслеттермех тивет, — ăнлантарчĕ тухтăр. — Леçĕр станцие, унта ăна кашни кун сăнаса тăрĕç.

Çапла лекрĕ Хамăркка çак сивĕ сарайри тăвăр читлĕхе.

## ПĔЧЧЕНЛĔХ

Сашук ăçта-ши? Хамăркка ăна тухтăр пырса кайнăранпа та курман. «Çапăçакансене читлĕхе хупмалла», — терĕ те тухтăр... Вĕсен шутне Сашук та кĕрет ĕнтĕ, вăл та çапăçрĕ вĕт-ха. Тулĕк темшĕн ун майлă пулса мар — ăна хирĕç. Хамăрккана ют сарайне килсе яни темиçе кун çитрĕ, тусĕ килмест те килмест. Нивушлĕ ăна хайхи тухтăр асăннă темле больницăна илсе кайса хупнă?.. Унăн та читлĕхĕ çакăн пек тăвăр-ши? Читлĕхе хупман пулсан килмелле-çке вăл ман пата. Е хытах кӳренчĕши? Ăна çыртас та, чавас та теменччĕ, хамăн килĕме çеç ют кушакран хӳтĕлесшĕнччĕ. Ют кушак шăршине эп таçтанах сисетĕп. Сашук вара, хăй лайăх ача пулсан та, инкек çывхарнине шăршă тăрăх пĕлмест. Килет

пулӗ-ха. Питӗ юрататчӗ вӗт вӑл мана. «Хамӑркка — ҫут тӗнчере чи-чи лайӑххи», — тетчӗ. Хӑй мана юратнине никамран та пытармастчӗ. Пӗррехинче хамах илтрӗм, амӑшне те ҫаплах каларӗ: «Сана пӗр вӑрттӑнлӑх пӗлтересшӗн, тулӗк кӳренмӗн-и? — тет. — Эпӗ пуринчен те ытларах хамӑрӑн Хамӑрккана юрататӑп, унтан — сана. Ҫилленместӗн-и, анне?»

Хамӑркка куна илтсен пӗр савӑнса, пӗр хӑраса ӳкнӗччӗ. Хӑйне сахалтарах юратнӑшӑн кӳренӗ те акӑ Сашукӑн амӑшӗ ӑна урама кӑларса ывӑтӗ. Анчах шикленни кӑлӑхах пулчӗ. Лешӗ йӑл кулса илчӗ те ывӑлне пуҫӗнчен ачашларӗ. «Эпир юратмасан кам юраттӑр-ха ӑна? Хамӑрӑн пултӑр тесе амӑшӗнчен уйӑрса илсе килтӗмӗр вӗт», — терӗ.

Ҫапла, ун чухне вӑл ӑна урама кӑларса ывӑтмарӗ. Халӗ вара Хамӑркка киле таврӑнасси е таврӑнас марри Сашук амӑшӗнчен те килет. Лар ӗнтӗ кунта хӑвӑн шӑпуна мӗнле татса парасса кӗтсе. Килте ҫемҫе диван ҫинче ҫывӑрнӑ чух кун иртсе каҫ пулни те сисӗнместчӗ. Кунта вара...

...Чим, ура сассисем илтӗнеҫҫӗ мар-и картишӗнче?

Тахҫантанпах тӑпсисене ҫу сӗрмен алӑк илемсӗррӗн хӑйӑлтатса уҫӑлчӗ те, сарайне Сашукӑн амӑшӗ кӗрсе тӑчӗ.

— Хальлӗхе кушакӑр чирлени-туни курӑнмасть, йӗркеллех пек. Анчах куна вунӑ кун иртмесӗр ҫирӗплетсе каламалли ҫук, кӗтме тивет, — ӑнлантарчӗ хӗрарӑма ун хыҫҫӑнах килсе кӗнӗ тухтӑр. — Елена Андреевна, тухса кайнӑ чухне сарай алӑкне лайӑх хупса хӑварӑр, тархасшӑн.

— Ну, мӗнле эс кунта? — картишӗнчен юр шывӗ юхса

кӗрсе пулнӑ кӳлленчӗк урлӑ сиксе каҫса Хамӑркка патнерех ҫывхарчӗ Сашук амӑшӗ.

«Ыйтать-ха тата!» — ютшӑнса пӑхса илчӗ ун ҫине кушак, анчах пӗр сас та кӑлармарӗ.

— Эх, Хамӑркка, Хамӑркка, мӗн туса хутӑн эсӗ? Сашукӑн алли хытах шыҫнӑ пирки ӑна ҫав кунах операци турӗҫ. Суранӗсем тӳрленмесӗр те тухаймасть больницӑран. Хӑвӑн та ҫак сивӗ сарайӗнче чылаях ларма тивет. Ҫак инкеке пула пурин те канӑҫ пӗтрӗ. Кунтан илсе тухсан сана ӑҫта кайса леҫесси пирки канашлатпӑр килте. Сашукӑн ашшӗ ӗҫлекен завода кайса ямалла марши тетпӗр. Завочӗ пысӑк, кушак валли ӗҫ ҫителӗклех унта. Хурал тӑрӑн. Кашни кун ӗҫлекен заводра выҫсах вилмӗн, рабочисем тӑрантарӗҫ. Киле илме ҫук вӗт-ха сана, кун пек ҫапӑҫаканскере. Ак пулӑ пӗҫерсе килтӗм. Юрататтӑнччӗ, ҫи. Инкек кӑтартрӑн пулсан та — хамӑрӑн чӗр чун, выҫӑ усрас килмест. Сашук та наркозран вӑранса ҫитсен тӳрех сан ҫинчен ыйтрӗ. Малалла мӗн тӑвассине хальлӗхе каламан-ха ӑна — хамӑр та пӗлместпӗр. Те яла кайса ямалла сана, ӗне фермине... Тен, пӗр-пӗр ырӑ ҫын аллине памалла?.. Ҫи атя, ҫи. Килти пек, пулӑ пӗҫерсе ҫемҫе ҫӑкӑрпа хутӑштарса паракансемех ҫук пуль кунта. Выҫӑ вилесрен кӑна тӑрантаркалаҫҫӗ. Кӳренетӗн-ха апла, ҫиместӗн. Юрӗ, эпӗ кайсан ҫийӗн.

Хамӑркка сас памарӗ, Сашук амӑшӗ алӑка тӑнч хупса тухса кайнине тунсӑхлӑн та ютшӑнарах пӑхса ларса юлчӗ.

Кун хыҫҫӑн кун иртрӗ. Хамӑркка хӑйне киле илсе каясса шанма та, кӗтме те пӑрахрӗ. Ытла та вӑрӑм-ҫке кӑнтӑрла та ҫутӑ кӗмен сарайри кунсем. Ҫывӑракан

Ч-43808
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

йытта пĕр-ик кун вырттарнă хыççăн лешĕ вăранасса кĕтмесĕрех йăтса тухса кайрĕç те, ун хыççăн Хамăркка пĕчченех тăрса юлчĕ. Алăк хăмисем типсе кушăркка-нипе пулнă хушăкран вăрăм уралла хĕвел пайăркки кĕрсе тухнисĕр пуçне урăх никам та килмест ун патне.Васкать пулас хĕвел пайăрки, нумай та тăмасть Хамăркка патĕнче. Тимĕр решетке витĕрех йăпшăнса кĕрсе çурăма ăшшăн сĕртĕнсе илет те тухса та каять. Килте чухне те пыратчĕ вăл ун патне. Пысăк чӳречерен кĕрсе урайĕнчи кавир çине лап выртатчĕ те куç хĕсмелле выля-выля Хамăрккана ыйхăлаттарсах яратчĕ. Лайăх ăна, ашкăнсан та никам та читлĕхе хупмасть. Халĕ ăçта хыпаланать-ши? Тата ăçтан пĕлнĕ-ха вăл кушака çак сарайри читлĕхе хупнине, епле шыраса тупма пултарнă? Хуравне ниепле те тавçăрса илеймест Хамăркка. Çакна çеç лайăх пĕлет: пурте хăйĕнчен сивĕннĕ самантра та çак çутă та ăшă пайăрка ăна манмасть, апла тăк вăл уншăн — чăн-чăн тус.

## ТАВЛАШТАРАКАН ТУССЕМ

Кăнтăрла самаях ăшăтса ярать те, чӳречен тулаш енчи янахĕ çине пат та пат туса тумламсем ӳкеççĕ. Урамра мĕн тери аван ĕнтĕ халĕ. Шел, уçăлма тухма ирĕк памаççĕ. Палата таса та çутă пулин те Сашук хăйне читлĕхри пекех туять. Юнашар кравать çинче выртакан Никита пулмасан кунта тунсăхласах вилме пулать. Вăл хирурги уйрăмне урăх нушапа лекнĕ — хоккейла вылянă чух мелсĕр ӳксе аллине хуçнă. Сашукран шăпах пĕр çул аслăскер питĕ ăслă: тем те пĕлет. Кӳрентермест хăйĕнчен кĕçĕнрех ачана, анчах калаçу

йытă-кушак çинчен хускалсан унпа тавлашма ан хăй. Никита шучĕпе, килте йытă усрани аванрах, усăллăрах. «Кушак мĕн вăл? Никама та шута хуманскер çӳрет хăй çулĕпе. Йытă тесен, вăл хăйĕн хуçине ĕмĕрлĕх парăннă чĕр чун, чăн-чăн тус». Никитăн та пур иккен çавăн пек тус — Джек ятлă овчарка. Ун çинчен вăл кунĕн-çĕрĕн каласа пама пултарать. Амăшĕ больницăна килсен те чи малтанах ывăлĕ тăват уораллă тусĕ пирки ыйтса пĕлет: уçăлма илсе тухнă-и ăна, мĕн çитернĕ, Никитăсăр тунсăхласа кун каçипех алăк умĕнче выртмасть-и?..

Сашук хирурги уйрăмне мĕншĕн лекнине пĕлсен Никита Хамăркка пирки тӳрех çапла каласа хучĕ:

— Пархатарсăр чĕр чун, хăйне кам тăрантарнине пĕлмест. Ун вырăнĕнче йытă пулас тăк килти çынна çыртмĕччĕ.

— Лайăх манăн Хамăркка, — хӳтĕлерĕ çăмламас тусне Сашук. — Сан йытту унăн чĕрни хури тĕшне те тăмасть!

— Çапла мар-и! — тарăхса кайрĕ куна илтсен Никита. — Йытăсем сунарçăсем шутланаççĕ. Кушаксене никам та сунара илсе каймасть.

— Хальхи вăхăтра этем йытăсăр та сунара тухма пултарать.

— Йытă кил хураллать! — парăнмарĕ Никита. — Кушака шанса ларсан пӳртне-çуртна вăрăсем йăлтах пушатса хăвараççĕ.

— Паянхи вăхăтра кил-çурта этем хăех сыхлама пултарать. Тем тĕрлĕ çăра, тем тĕрлĕ сигнализаци шухăшласа кăларнă.

— Йытăсем кĕтӳ кĕтеççĕ, кушаксене ĕçлеттерсе пăхха, вĕсем хăйма çисе хăяккăн выртма кăна пĕлеççĕ.

— Тупнă тĕлĕнмелли. Кĕтĕве йытăсăрах кĕтме пулать.

— Çурçĕрте йытăсем çуна та туртаççĕ. Кушака кӳлсе пăх-ха: ун вăйĕпе çунана мар, çунашкана та вырăнтан хускатаймăн.

— Сан йыттусем кĕçех ĕçсĕр тăрса юлĕç акă. Паян Çурçĕрте те юр çинче путса анса кайман техникăпа усă кураççĕ. Телевизор курмастăн-им?

— Йытă шыва путма пуçланă ачасене пĕрре мар çăлнă, вĕсене пушартан илсе тухнă тĕслĕхсем пур. Манпа кирек мĕн чухлĕ те тавлашма пултаратăн, анчах та этеме йытă пек парăннă чĕр чун урăх никам та çук. Пĕлетĕн-и эс, Японире, Токиоран инçех мар вырнаçнă пĕр станцире, йытта асăнса палăк та лартнă. Çав йытă хуçине кашни кунах ĕçе ăсатса янă, кĕтсе илнĕ тет. Пĕррехинче хуçи таврăнмасть. Вăл чирлесе ӳксе больницăна лекнĕ имĕш, унтан сывалса тухайман. Йытти вара ăна кĕтнĕ те кĕтнĕ. Хуçи таврăнасса шанса вунă çул хушши станцие çӳренĕ. Çакăн çинчен пĕлсен çынсем ăна чысласа палăк лартаççĕ. Вăт!

— Йыттусемсĕр пуçне нимĕн те курмастăн пулас эсĕ. Японирех çичĕ кушак ячĕпе уçнă храм пур. Тахçан авал пĕр çар пуçĕ вĕсене похода илсе кайнă. Мĕн тума тетĕн-и? Вăхăт пĕлме. Сехетсем пулман ун чухне. Кушаксен куçĕсем хĕсĕнсе е çавракан пăхнине сăнаса вăхăт пĕлнĕ çар çыннисем. Çутăра вĕсен куçĕсем хĕсĕнерех пăхаççĕ, тĕттĕмре çавракаланаççĕ. Халь те пур тет çав храм, унта сехет кăларакансем тата юсакансем хăйсен ĕçĕ ăнса пытăр тесе кĕлтума çӳреççĕ тет. Атте каласа пачĕ. Вăл тем те пĕлет.

— Кушака хĕсĕк куçĕшĕнех паттăра кăларасшăн мар пуль те эсĕ?

— Кушак пурнăçĕ тăршшĕпех пĕртен-пĕр ĕçе тăвать — шăши тытать, йĕке хӳресене хăратать. Çакăншăн та вăл ĕмĕрлĕх мухтава тивĕç. Пирĕн патра çеç мар, Çĕр чăмăрĕн кашни кĕтесĕнче. Ун ĕçне урăх никам та тăваймасть.

— Каларăн та вара, шăшисене наркăмăш сапса тытма пулать.

— Тытса пĕтерме май çук пуль çав, çавăнпа Санкт-Петербургри Эрмитажра ятарласах кушаксем усраççĕ тет. Вĕсем пулмасан унти чаплă картинăсене шăшисем йăлтах каскаласа пĕтерме пултараççĕ тет.

— Эрмитажри картинăсем çеç мар, пĕтĕм хула хăрушлăха кĕрсе ӳкме пултарнă кушаксем пулмасан, — илтĕнсе кайрĕ сасартăк ватă санитарка сасси. Пĕр-пĕрне парăнмасăр тавлашса ларакан арçын ачасем вăл хăçан кĕрсе тăнине те сисмен. — Японире çеç мар, Петербургра та пур кушаксене чысласа лартнă палăксем. Иккĕ тан. Анчах çын çӳрекен çĕрте мар, подъезд алăкĕсем тăрринче.

— Мĕнпе палăрнă вара вĕсем палăк лартмалăхах, каласа парăр-ха, Лилия Петровна, — харăсах ун еннелле çаврăнчĕç ачасем.

— Иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче пулнă ку. Хула — ун чух вăл Ленинград ятлăччĕ — тăхăр çĕр кун фашистсен блокадинче пулнине пĕлетĕр пуль тетĕп. Тăшман куллен бомба тăкакан хулара выçлăх хуçаланатчĕ. Çимелли çуккипе çынсем çеç мар, йытă-кушак тавраш те асапланатчĕ. Сахаллансах юлнăччĕ вĕсем, йĕке хӳресемпе шăшисем вара ĕрчесе кайнăччĕ, тĕттĕмре урама тухма та шиклĕччĕ.

— Эсир, Лилия Петровна, çав хулара пурăннă-и?

— Эп пӗчӗк пулнӑ ун чух, пурне те тӗплӗнех астумастӑп. Анне каласа панӑ тӑрӑх, йӗке хӳресем урамра пӗр шиксӗрех кӗшӗлтетсе ҫӳренӗ, ҫӑнӑх арманне, ҫӑкӑр лавккисене тапӑннӑ, пахчасене пушата-пушата хӑварнӑ. Ҫав сӑтӑрҫӑсене мӗнле пӗтермеллине никам та пӗлмен. Вара 1943 ҫулта Ленинграда Ярославль облаҫӗнчен сӑрӑ кушаксем илсе килме йышӑну тунӑ тет. Вӗсенчен йӗке хӳресем питӗ хӑраҫҫӗ имӗш. Кушаксене тӑвата вакун тиесе килнӗ теҫҫӗ, вӗсене ҫынсем самантрах илсе кайса пӗтернӗ. Пасарта кушак ҫӑкӑртан та хаклӑрах тетчӗ анне. Каярахпа кушаксене Ҫӗпӗрти ял-хуларан та пинӗ-пинӗпе пуҫтарса пынӑ. Вӗсем пулӑшнипе кӑна йӗке хӳресенчен хӑтӑлнӑ тесе калаҫатчӗҫ. Ӳстеререх калаҫҫӗ-и, чӑнах ҫапла пулнӑ-и — ҫирӗплетсе калаймастӑп, пире выҫӑ хуларан Атӑл тӑрӑхне илсе килчӗҫ.

— Авӑ мӗнле иккен, — шухӑша кайса шӑпланчӗҫ ачасем.

## Ӑҫта-ши ҫӑлӑнӑҫ?

Никитӑпа Сашук кушакпа йытта танлаштарса тавлашма пӑрахрӗҫ. Пӗр карта лартма май ҫук чӗр чунсене епле пӗр виҫепе виҫӗн-ха ӗнтӗ? Никитӑшӑн Джекран лайӑхрах тус ҫук, Сашук хӑйӗн кушакне ним парсан та никампа та улӑштарас ҫук.

— Ҫӗр ҫинчи чи лайӑх кушак вӑл. Мӗн пулчӗ ӑна ҫав кун — ӑнланма пултараймастӑп. Ҫав пӑтӑрмах хыҫҫӑн анне ӑна ветеринари станцине леҫрӗ, каялла илесшӗн мар. Хӑрать. Пӗрре ҫынна тапӑннӑскер татах инкек кӳме пултарать тет. Урнӑ чӗр чунсенчен чир ерни-

пе ерменнине пӗлмешкӗн вунӑ кун хушши станцире сӑнаса тӑраҫҫӗ Хамӑрккана, кайран... — Сашук каласа пӗтермесӗрех хаш сывласа ячӗ.

— Кайран мӗн? — чӑтӑмсӑррӑн ыйтрӗ Никита.

— Анне каланӑ тӑрӑх, кушак чирлӗ пулсан ӑна ҫывратса яраҫҫӗ. Чирлӗ мар вӑл пирӗн, пач та иккӗленместӗп.

— Чирлӗ мар тӑк кулянма та кирлӗ мар, кушаккуна каялла киле парса ярӗҫ.

— Илсе пырасшӑн мар ҫав анне. Ӑна ялти фермӑна е атте ӗҫлекен завода парса ярасшӑн. Заводра ҫухалса каять вӑл, выҫса та вилет. Ют ҫынсенчен ютшӑнаканскер хӑрушлӑха пӗлмесӗрех пӗр-пӗр станок айне кӗрсе кайӗ те — пӗтрӗ вара. Килте пылесос ӗҫленӗ чух та кресло хыҫне тарса пытанать. Заводра вара, атте каланӑ тӑрӑх, станоксем мачча ҫӳллӗш, пур ҫӗрте те хӑлха хупланса лармалла шав тӑрать.

— Апла тӑк яла парса ярӑр. Фермӑна. Шӑшисем тыттӑр.

— Санӑн хӑвӑн Джекунтан уйрӑлас килет-и?

— Ним тусан та...

— Вӑт-вӑт. Маншӑн та Хамӑркка ҫавӑн пекех хаклӑ. Вӑл кашни каҫах ман ура вӗҫӗнче ҫывӑрать. Ҫиме те пули-пулми апата ҫимест, анне ӑна ирхине пулӑ пӗҫерсе ҫӑкӑрпа хутӑштарса парать. Каҫхине «Вискас» ҫитеретпӗр. Урӑхла йышши апата тиркет. Ӑна фермӑна кайса яни ҫапкаланса ҫӳреме кӑларса яниех пулать.

— Апла тӑк аннӳне ӳкӗте кӗрт: Хамӑрккана каялла киле илсе килтӗр.

— Кушак текех никама та тапӑнас ҫуккине мӗнле каласа ӗнентерес-ха ӑна? Мана больницӑра хӑварнӑ чух

та кунтан йӗрсе тухса кайрӗ. Куҫне вӑрттӑн шӑла-шӑла илнине хамах курса юлтӑм.

— Ан кулян, мӗн те пулин шухӑшласа тупатпӑрах, — лӑплантарма тӑрӑшрӗ ҫӗнӗ тусне Никита.

Мӗн тӑватчӗҫ-ши Сашукпа Никита хӑйсене инкекрен ҫӑлнӑ хирург канаш паман пулсан? Ачасен сывлӑхне кулленех тӗрӗслесе тӑракан Иван Васильевич тухтӑр палатӑна пырсан нихӑҫан та васкаса тухса каймасть. Сашукпа Никита мӗнпе интересленнине вӑл лайӑх пӗлсе тӑрать.

— Сирӗн тӑватӑ ураллӑ туссем пурри питӗ аван, — калаҫу пуҫарчӗ тухтӑр пӗррехинче, ачасен суранӗсем ӳт илме пуҫласан. — Эсир вӗсемпе вылятӑр, йӑпанатӑр,



анчах пĕр япалана шута хумастăр: йытăпа кушак теттесем мар, вĕсем — чĕрĕ чунсем.

— Эпĕ хамăн Джека питĕ юрататăп, — терĕ Никита.

— Маншăн вара Хамăркка — чи-чи лайăххи, — пĕлтерчĕ хăйне çăмламас тусĕ чавса-çыртса пĕтернине тахçанах маннă Сашук.

— Юратни аван, анчах ку çеç çителĕксĕр. Кашни чĕрĕ чунăн хăйĕн пурнăç йĕрки пур: çут çанталăк аталантарни е, этемпе юнашар пурăнать пулсан, вăл хăнăхтарни. Çавсене пĕлмесĕр чĕр чунсемпе чăн-чăн туссем пулма йывăр.

— Ăçтан пурне те пĕлсе çитерес-ха пирĕн? — хирĕçлеме пăхрĕç ачасем.

— Хальхи саманара пĕлес ăнтăлу кăна пултăр. Шкул библиотекинче йытă-кушак çинчен çырнă кĕнекесене тупса вулама тăрăшăр. Сирĕн иксĕрĕн те килĕрте компьютер пур пуль-ха?

— Пур, — харăсах хуравларĕç Никитăпа Сашук.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сире?

— Епле «мĕн тума»? — тĕлĕнчĕ Никита. — Унта мĕн чухлĕ вăйă! Тата компьютерпа такампа та калаçма пулать, урама тухмасăрах, тĕл пулмасăрах.

— Вăт-вăт, каллех вăйă кирлĕ сире. Интернетра вара йытăсемпе кушаксем çинчен тем те вуласа пĕлме пулать. Вĕсен характерĕ, пурнăç йĕрки, çут çанталăк панă йăлисем çинчен, вĕсене мĕнле пăхмалли çинчен тата ыттине те. Пĕр-пĕр ыйту сиксе тухсан йытă-кушак юратакан ытти çынсемпе канашлама май пур. Саша, кушак юлташăрпа иксĕре мĕншĕн тапăннин сăлтавне пĕлес килмест-и санăн? Малашне çакăн пек инкеке тепĕр хут лекес теместĕн вĕт.

Калаçу çакăнпах вĕçленмерĕ, пĕр каçхине, дежурствăна пырсан, Иван Васильевич ачасене хăех компьютер умне чĕнсе илчĕ.

— Акă вулăр мĕн çырать кушаксен характерĕпе йăлисем çинчен вĕсене тĕпчесе наука ĕçĕсем пичетленĕ нимĕç ученăйĕ.

Никитăпа Саша иккĕшĕ те куçĕсене монитор çине тĕллерĕç.

— Авă мĕнле! — тĕлĕнчĕ Сашук вуласа тухсан. — Кушак хăйĕн таврашĕнчи территорие виçĕ пая уйăрать иккен. Эпир пурăнакан хваттер уншăн — чи çывăх территори. Унта вăл хăйне пĕртен-пĕр хуçа тесе шутлать, ют кушака кĕртмест. Тинех ăнлантăм пулас унăн хăшпĕр йăлисене. Ирхине эпĕ тăнă-тăман Хамăркка мана балкон патне ертсе каять, унăн алăкне уçасса чăтăмсăррăн кĕтсе ларать. Балкона тухса кĕнĕ хыççăнах вăл алкумне çул тытать. Коридора тĕрĕслесе кĕмесĕр те лăпланмасть. Кăмăлне çырлахтармасан эп утса пынă чух такăнтараслах умран чупса каçать.

— Калама чĕлхи пулсан ура айĕнче такăнса-çапăнса çӳремĕччĕ. Хăйĕн территорине куллен тĕрĕслемелле вĕтха унăн. Çавăнпа ертсе каять те вăл сана балконпа алкумне, — тавçăрса илчĕ Никита та. — Кур-халĕ, эп йытăсем çеç хăйсен кил-çуртне сыхлаççĕ пуль тесеччĕ...

— Хамăркка подъездри коридорта пулкалать, анчах сайра хутра çеç, çавăнпа унта питех ăнтăлмасть. Подъездран ют кушак сасси илтĕнсен çеç канăçсăрланать, — çăмламас тусĕн йăлисене аса илме тытăнчĕ Сашук.

— Вăл унăн территорийĕн иккĕмĕш пайĕ пуль вара. Килĕнчен аякра — урамра, эппин, — вăл хăйне пачах урăхла тытать. Шăрша питĕ çивĕч туякан Хамăркка

Илюка мĕншĕн тапăннă тесе шутлатăр эсир? Ман шутпа, вăл унран ют кушак шăрши кĕнине тӳрех сиснĕ. Ку, унăн ăнлавĕпе, тăшман шăршиех. Шăрши пулсан тăшманĕ те çывăхрах тесе шутланă, çавăнпа тапăннă та, — ăнлантарчĕ Иван Васильевич. — Тата эсир питĕ шавлăн калаçнă. Хăш-пĕр чĕр чунсем шăв-шава юратмаççĕ.

— Айван Хамăркка! Унсăр пусне пире урăх пĕр кушак та кирлĕ мар!

— Пачах та айван мар, — хирĕçлерĕ хирург. — Çак чĕр чун хăрушлăх çывхарнине шăршă тăрăх уйăрса илме, хăйне хăй хӳтĕлеме хăнăхнă. Кушаксен йăхĕнче çак хăнăху ĕмĕрсем хушши аталанса пынă. Паянлăха юрĕ, — палатăна кайма вăхăт çитнине систерчĕ Иван Васильевич.

— Хамăрккана ют çынсен аллине парасран е çывратса ярасран сыхласа хăварсан пĕлĕттĕмĕр-ха та малашне унпа тимлĕрех пулмаллине, — шухăшлăн калаçрĕ Сашук палатăналла утнă май. — Кушака ветеринари станцине леçнĕренпе кĕçех вунă кун çитет. Аттепе анне ун пирки хăйсем мĕн шут тытнă-ши?..

## ЫРĂПА ВĔÇЛЕННĔ ПĂТĂРМАХ

Хамăркка шăпине Сашуксен вунă хутлă çуртĕнче пулса иртнĕ пĕр пăтăрмах татса пачĕ. Ывăлĕ валли улма-çырла туянма пасара кайса килесшĕнччĕ Елена Андреевна. Анчах каясси пулмарĕ. Вăл килтен тухнă-тухман ача-пăча сасси хăлхана кĕчĕ. Пĕр-пĕрне пӳлсех тем пирки тавлашаççĕ.

— Чӳрече умӗнчи кӑпӑш юр мӗншӗн ытла та хӑвӑрт ирӗлсе пӗтрӗ-ши, — пӑшӑрханса калаҫать вӗсенчен пӗри. — Ури шуса кайсан мӗскӗн чӗр чун тӳрех асфальт ҫине персе анать.

— Шухӑшласа тупрӑм мӗн тумаллине, — пӳлчӗ ӑна тепри, — килтен ҫемҫе утиял илсе тухмалла та ӑна тӑватӑ кӗтесӗнчен тытса саркаласа тӑмалла. Мӑрӑлккана чӑкӑтпа илӗртсен вӑл сикӗ те тӳрех утиял ҫине лекӗ.

— Сикмесен мӗн тӑвӑн? — иккӗленчӗ тепри. — Утиялна кунӗпех тытса тӑраймастӑн вӗт.

Инкеке сиснӗ Елена Андреевна ачасем патне ҫывхарчӗ.

— Елена аппа, пӑхӑр-ха ҫӳлелле, Татьяна Петровнӑн



кушакĕ темле майпа форточкăран кантăк янахĕ ҫине сикнĕ, — ҫӳлелле тĕллесе кăтартрĕҫ ачасем. — Халĕ ни шалалла кĕреймест, ни аялалла анаймасть. Ҫиччĕмĕш хутран ӳксен вилет вĕт вăл.

Татьяна Петровна ĕмĕрĕпех шкулта ачасене вĕрентнĕ. Тивĕҫлĕ канăва тухни те нумай пулать ĕнтĕ. Урăх хуласенче пурăнакан ывăлĕпе хĕрĕ час-часах килсе ҫӳреймеҫҫĕ. Мăрăлкка кушакĕпе ĕҫлĕ пулса йăпанать ватă хĕрарăм. Кун каҫиччен ик-виҫĕ хут та уҫăлма илсе тухать ăна. Лавккана та ҫавăншăнах утать — ачаш чĕр чуна сĕтпе ҫемҫе ҫăкăр кирлĕ. Мăрăлккипе иккĕшĕ картишне тухсан вĕсене тӳрех ачасем сырса илеҫҫĕ: пĕри те тепри кушак ҫурине алла илсе ачашлать. Мăрăлкка пуриншĕн те юратнă чĕр чун пулса тăнă.

— Татьяна Петровна хăй ҫывăрать-ши вара? Ҫиччĕмĕш хута хăпарса хваттер алăкĕн шăнкăравĕ ҫине пусăр-ха, ачасем, — сĕнчĕ Сашук амăшĕ.

— Шăнкăравлаpăмăр ĕнтĕ, уҫакан пулмарĕ, — хуравларĕ Сашукпа пĕр класра вĕренекен хĕр ача. — Татьяна Петровна ĕнертенпех уҫăлма тухман.

— Таҫта кайнă-ши вара? — ним шухăшлама пĕлмерĕ Елена Андреевна. — Каяс тăк кушакне пĕччен хăвармалла мар пек. Тем сиксе тухман пуль те?..

— Чирлесе ӳкмен-ши вăл? — чарăнчĕ подъезда кĕме тăнă тепĕр хĕрарăм. — Сывă мар пуль, кĕни-тухни курăнмасть.

— Мĕн тумалла-ши ĕнтĕ халь: «васкавлă пулăшу» чĕнес — Татьяна Петровна алăкне уҫмасть, ним те тумасан — кушакĕ ӳксе вилме пултарать.

— Подъезд старостине пĕлтерес те милицие чĕнес, — сĕнчĕ алăк умне пухăннă ҫынсенчен тахăшĕ.



Кирлӗ ҫынсене чӗнсе пӗччен пуӑнакан пенсионерка алӑкне уҫиччен самаях вӑхӑт иртрӗ. Ахальтен пӑшӑрханман ача-пӑча. Анчах кушак ҫуринчен те ытларах кил хуҫи хӑй пулӑшу кӗтнӗ иккен. Ватӑ ҫын пуҫӗ ҫаврӑннӑран ӳксе урине хуҫнӑ-мӗн, урайӗнче ахлатса выртать.

— Кушак ҫури кантӑк янахӗ ҫине тухса ачасен куҫӗ тӗлне пулман пулсан хӑҫанччен выртаттӑмши пӗччен? — куҫҫульне шӑлса Мӑрӑлккине ыталарӗ Татьяна Петровна. — Тавтапуҫ сире, ачамсем, манӑн кушака юратнӑшӑн.

— Эпир сире те юрататпӑр, Татьяна Петровна. Сире те, Мӑрӑлккана та, — терӗҫ хӗр ачасем.

Суранланнӑ хӗрарӑма «васкавлӑ пулӑшу» машинипе сиплев ҫуртне ӑсатрӗҫ. Мӑрӑлккана кӳршӗ хӗрарӑмӗ пӑхма пулчӗ.

Пасара каяс шухӑша пӑрахӑҫласа Сашук амӑшӗ ветеринари станцине васкарӗ. «Килсе илмесен ҫывратса ярӑр тесе калаҫса татӑлнӑччӗ. Паян Хамӑрккана унта леҫни вунӑ кун ҫитет. Ӗлкӗресчӗ», — уттине хӑвӑртлатрӗ вӑл.

Больницӑран Сашука ашшӗ илсе килчӗ.

— Тинех! — ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ вӗсене кӗтме коридора тухнӑ амӑшӗ, ҫавӑнтах ывӑлне хӑй ҫумне тыт-

са çупăрларĕ. Çак самантра Сашук урине такам çемçен сĕртĕнсе илчĕ. Унтан татах, татах...

— Хамăркка, килтех-çке эсĕ? Мана хирĕç тухрăн-и? — амăшĕн ытамĕнчен вĕçерĕнсе кушакĕ патне пĕшкĕнчĕ ача. Çăмламас тусне йăтса илсе çӳлелле çĕклерĕ: — Пысăк пул!

Пĕчĕк чухне Сашука та ашшĕ çӳле-çӳле çĕклесе çавăн пек калатчĕ. Халь вăл пĕчĕк ача мар ĕнтĕ. Хăй ыттисемшĕн тăрăшма, вăйсăррисене хӳтĕлеме пултарать. Арçын ача кушака кăкăрĕ çумне тытса ыталарĕ.

— Малашне çапăçмăпăр иксĕмĕр, туслă пурăнăпăр.

Хамăркка йĕпе сăмсипе ача питне перĕнчĕ. «Килĕшрĕмĕр, çураçрăмăр» тени пулчĕ ĕнтĕ ку.

— Сăмсу йĕпе, апла тăк сывах эс, сывах, — хаваслăн каласса Сашук хваттере кĕчĕ.

*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего школьного возраста

**Матвеева (Антонова) Галина Алексеевна**

# ХАМĂРККА
# ЧЛЕН СЕМЬИ

**Рассказ**

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Федорова*
Художник *П.Н. Сергеев*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *А.В. Семенова*
Корректоры *З.И. Гаврилова, Н.В. Вечеркина*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 14.02.11. Формат 70×90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,34. Уч.-изд. л. 1,24. Тираж 1000 экз. Заказ №171. Изд. №10.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография №1».
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

35.00



Чăваш кĕнеке издательстви